Ял çыннисен сывлăхĕшĕн

# Пĕрремĕш вырăна тивĕçнĕ



«Муркашри тĕп больница» муниципаллă сывату учрежденийĕ «Чăваш Республикинчи 2009 çулхи чи лайăх сывлăх сыхлав учрежденийĕ» конкурсра «Районти чи лайăх больница» номинацире 1-мĕш вырăн йышăннă. Çакăн пирки сывлăх сыхлавçисен кунне халалласа ирттернĕ савăнăçлă пухура ЧР Президент администрацийĕн ертӳçи А. Шарапов вице-премьер, ЧР сывлăх сыхлавĕн тата социаллă аталану министрĕ Н. Суслонова пĕлтернĕ. Çак ырă хыпарпа пĕрлех министр ЧР Президенчĕ Н. Федоров алă пуснă 500 пин тенкĕлĕх медицина оборудованийĕлĕх свидетельствăна Муркаш районĕн тĕп больницин тĕп врачне тата ЧР Патшалăх Канашĕн депутатне В. Данилова панă. Кусем вĕсем вар-хырăм чирĕсене тĕрĕслемелли çĕнĕ йышши фиброгастродуденоскоп аппарат, чĕрене тĕрĕслесе тăракан кардиомонитор.

Çĕнĕ ӳсĕм – районти сывлăх хуралĕнче вăй хуракансен пĕрлехи ĕçĕ, тăрăшулăхĕ. Апла пулсан вĕсене çак чыспа пурин ячĕпе те тав тăвар, малашне те обществăшăн ответлă ĕçре ăнăçу кăна сунар. Общество сывă пулсан район та, республика та, Раççей те малалла кăна аталанĕç. **А. ПЕТРОВ.**

Паян – Раççей çамрăкĕсен кунĕ

# Çамрăксемпе ĕçлетпĕр, çамрăксемшĕн тимлетпĕр

***Ачасем пирĕн малашлăх тетпĕр пулсан, çамрăксем – çав малашлăха çывхартакансем. Вĕсен пурнăçне лайăхлатас, умри ыйтăвĕсене татса парас тесе эпир пурне те тăватпăр-и-ха? Пурнăçри шайлашăва тивĕçлĕ шая кăларас тесен мĕн çине тимлĕх уйăрмалла-ха ытларах? Ыйтусем нумай, анчах вĕсем çине эпир çамрăксене хăйсене калаçтармасăр тулли хурав парайрас çук. Çамрăксен кунĕ умĕн эпир хуçалăхсем хушшинчи «Моргаушская» строительство организацийĕн финанс директорне Ирина Владимировна АНТОНОВАНА хаçат тĕпелне чĕнтĕмĕр. Пирĕн хăна тĕп ĕçе пурнăçланă хушăрах асăннă строительство организацийĕнчи çамрăксен канашĕн председателĕ, депутатсен районти Пухăвĕ çумĕнчи çамрăксен парламенчĕн членĕ.***



**– Ирина Владимировна, хăвăр пуçарулла çамрăк специалист пулнăран тата сирĕн организацие çыхăну тытсах тăнăран маншăн «Моргаушская» МСОра çамрăксем ытларах ĕçлени паллă. Çамрăксен кунĕ умĕн вĕсем пирки мĕн калайратăр?**

– Малтанах хамăр патăмăрти пур çамрăксене те Çамрăксен кунĕпе саламлатăп. Вĕсене сывлăх та ăнăçу суннипе пĕрле малашне татах пуçаруллăрах та активлăрах пуласса шанатăп.

Пирĕн строительство организацийĕ йĕркеленнĕренпе кăçалхи апрелĕн 16-мĕшĕнче 50 çул пулчĕ. Организацишĕн ку вăл ĕçлеме хăнăхса çитнĕ çамрăкăн ӳсĕмĕ. Çавăнпа та ала усса лармастпăр, хамăр историн кашни страницине ĕçпе çырса пыратпăр, çĕршыв хăй умне лартнă тĕллевсене, Президент палăртнă программăсене пурнăçлассипе çанă тавăрса ĕçлетпĕр.

Организаци хăй çамрăккине кура пирĕн патăмăрта вăй хуракансем те ытларах çамрăксем. Çапла вара эпир çамрăксемпе ĕçлетпĕр, хамăр ĕçĕмĕре кура çамрăксемшĕнех тимлетпĕр. Эпир тăвакан хваттерсене шăпах çамрăксем кĕтеççĕ те. Паян пирĕн патăмăрта куллен ĕçе тухакан хамăр ĕçченсем 60 çын. Тепĕр çавăн чухлĕ пирĕн патăмăрта ĕç килĕшĕвĕ туса ĕçлеççĕ. Вĕсен вăтам ӳсĕмĕ 35 çул – çамрăк вăхăт. Пĕрлехи тăрăшулăхпа эпир паян Муркашри Паркăвăй урамĕнче 40 хваттерлĕ çурт тăвассипе, район центрĕнче, Мăн Сĕнтĕрте, Ярославкăра нумай хваттерлĕ çуртсене тĕпрен юсассипе ĕçлетпĕр. Кунпа пĕрлех манăн паян хаçат вулакансене Москакассинче иртнĕ çул хута янă 36 хваттерлĕ çуртра паян тесен паян сутмалăх 18 хваттер пурри пирки те пĕлтерессĕм килет.

**– Хваттер хакĕсем те сирĕн çӳл тӳперисем мар.**

– Çапла, эпир хамăр тунă хваттерсене сутассине ансатлатрăмăр. Çакăнпа çамрăксем анлă усă курма пултараççĕ. Вĕсен хăтлăхĕ сире килĕшессе шанатпăр. Хваттерсенче газ кăмакисем, чугун вырăнне алюмини радиаторсем вырнаçтарнă. Хваттерсенче çынсене кăмăллă та хăтлă пултăр тесе хваттерсен тĕрлĕ калăпăшĕсемпе ĕçлерĕмĕр. Тĕслĕхрен, хулара пĕр пӳлĕмлĕ хваттер 36-38 тăваткал метр пулсан, эпир çак виçене 41,5-не çитерсе хваттерсен хăтлăхне малти вырăна кăлартăмăр. Пирĕн хваттерсене курттăммăн укçалла, «Ипотека плюс» кредитпа, «Çамрăк çемье» программăпа, «Ялти çамрăк специалистсем» программăпа илме пулать.

**– Паянхи çамрăксем пирки хăвăр шухăшăрсемпе паллаштарсамăр.**

– Çамрăксем ыранхи кунпа пурăнманни шухăшлаттарать. Нумай чух вĕсен пурнăçне илемлĕх кĕртессипе вырăнсенчи пуçлăхсем те ĕçлесех çитерейменççĕ. Çапла вара вĕсем 8 сехете ĕçе килеççĕ те 17 сехетре киле каяççĕ. Тепĕр пайĕ вара пачах ĕçлемест. Вĕсенчен пĕрисем вăхăта эрех-сăра ĕçсе ирттерни кашнинех шухăшлаттармалла. Çамрăксем çак усал çул çине ан тăччăр тесе эпир хамăр патра вĕсен пурнăçне илемлĕрех те кăсăклăрах тăвассипе тăрăшатпăр. Тимлĕх уйăрнин усси пур. Александр Федоров тĕп инженер (вăл кăçал Президент стипендиачĕ), Надежда Антонова штукатур-маляр, Андрей Сахаров каменщик, Валентина Иванова секретарь спортра тата культурăллă канура активлăх кăтартаççĕ, хамăр организаци ятне çĕклеççĕ. Президент стипендиачĕн чысне юлашки çулсенче çамрăксем çине-çинех тивĕçни те пирĕн организацире çамрăксен ыйтăвĕ иккĕмĕш вырăнта тăманни пирки калать.

Паянхи çамрăксем пурте майлах аслă пĕлӳ илессишĕн çунаççĕ. Анчах вĕсем малашлăха пăхса вĕренменни ĕç рынокĕнче йывăрлăхсем кăларса тăратать те çамрăк специалистсем ĕççĕр юлаççĕ. Анчах пуç усман, йывăрлăхсене парăнтарма хăнăхнă çамрăкшăн çакă та пурнăç алăкĕ хупăннине пĕлтермест. Пĕлӳ пур, тăрăшулăх çитет – хăвăн ĕçӳпе рынока тух. Патшалăх кунта çамрăксене пулăшу панине районта «Бизнес-инкубатор» уçăлни те çирĕплетсе парать. Саккунсемпе паллашмалла, вĕсемпе ĕçлеме вĕренмелле.

**– Сирĕн сăмахсене хăвăр организаци ĕçĕпе пăхсан мĕн курăнать?**

–Япăххи нимĕн те çук. Эпир тимленипех 2007 çулта районта ĕçлекен çамрăксен спартакиади çул уçрĕ. Халĕ вăл çулсерен вăй илсе пырать. Муркашри физкультурăпа спорт комплексĕ уçăлни çамрăксемшĕн питĕ лайăх. Пирĕн директор В. Семенов çамрăксен пуçарăвне яланах ырласа йышăнать, вăй çитнĕ чухлĕ пулăшать, ума лартнă тĕллевсем епле пурнăçланнипе интересленсех тăрать.

Ĕçрен пăрăнакан çамрăксем эрех-сăра тытăмне лекеççĕ. Вĕсене çак çултан пăрасси – паянхи ертӳçĕсемпе пуçлăхсен ĕçĕ, ырă малашлăхлă çамрăксен тĕллевĕ. Çамрăксене ĕçе явăçтарассипе хамăрăн МСО пуçарăвне кăтартас килет. 10-11 классенче вĕренекенсене çуллахи каникулта ĕçе илетпĕр те вĕсем ĕç укçи илсен епле савăннине курасчĕ сирĕн! Хăв тар юхтарса алла илнĕ укçа-çке вăл! Çавăн пекех строительство техникумĕнче, ЧГУн экономика факультетĕнче вĕренекенсем пирĕн патăмăрта практикăра пулаççĕ те хыççăн вĕсем патшалăх экзаменĕсем тытнипе, дипломсем епле хӳтĕленипе эпĕ хамах интересленсе тăратăп. Çав çăмрăксен пĕр пайĕ кайран хамăр патăмăртах ĕçе кӳлĕнет. Çамрăк специалистсен квалификацине ӳстерессипе те пирĕн иккĕмĕш вырăнта мар. Вĕсене çак ĕçре опытлăрах специалистсем пулăшса пыраççĕ. Кун пек маттурсене те паян ятранах асăнас килет. Вĕсем: А. Игнатьев мастер, каменщиксен бригадирĕ Г. Петров, штукатур-малярсен бригадирĕ М. Романова, производство пайĕн пуçлăхĕ Л. Яндушкина. Вĕсен тăрăшулăхĕпе çамрăксене ытларах вĕрентсе хатĕрлени пирĕн ĕç калăпăшĕсене ӳстерме çеç пулăшать. Тавах вĕсене те.

**– Мĕн сĕннĕ пулăттăр паянхи çамрăксене уяв кунĕнче?**

– Кăçал вăтам шкул пĕтернисен хăйсем суйласа илнĕ вĕренӳ заведенийĕсене ăнăçлă вĕренме кĕмелле пултăр. Аслă е ятарлă вăтам пĕлӳ паракан вĕренӳ заведенийĕсенчен диплом илсе тухакансене вара илнĕ пĕлĕве производствăра кăтартма сĕнетĕп. Çамрăксем паян вĕсен ăсĕпе тата мал туртăмлăхĕпе пур çĕрте те кирлĕ.

**А. БЕЛОВ калаçнă.**

Шăмат кунхи рубрика

# Саккун вăл пуриншĕн те пĕрре

***Хаçат вулавçисен ыйтăвĕсене паян Чăваш Республикинчи РФ прокуратурин следстви комитечĕн следстви управленийĕн Етĕрнери районсем хушшинчи следстви пайĕн следователĕ, 3-мĕш класлă юрист Ленар Закирзянович ДАВЛЕТШИН хуравлать. Пирĕн паянхи хăна – районти ответлă вырăнсенче ĕçлекен çамрăксенчен пĕри. «Çамрăксене саккуна пăхăнса ыранхи куна шанса пурăнма сĕнетĕп», – терĕ Ленар Закирзянович Раççейри çамрăксен кунĕ умĕн яш-кĕрĕме салам сунса.***

## 6,5 çуллăха ирĕкрен хăтарчĕç

**Вăрманкассинче иртнĕ çуркунне Т. Гроссу гражданка кĕске хирĕç тăрура пĕрле пурăнакан Ю. Павлова çĕçĕпе чиксе вĕлернĕшĕн мĕнле ответ тытрĕ-ши?**

**Хаçата килнĕ çыруран.**

Ял çыннисем йĕркелĕхшĕн тăрăшни тата вĕсем йĕрке пăсакансене тивĕçлипе айăплассишĕн пулни пирĕн ĕçĕмĕрĕн ответлăхне ӳстерет кăна. Çакна эпир ăнланатпăр. Çавăнпа та вулакансен ыйтăвĕ çине хуравлама та кăмăллă.

Вулавçăсем хускатнă ĕç кăçалхи пуш уйăхĕн 2-мĕшĕнче Йӳçкасси ял тăрăхĕнчи Вăрманкасси ялĕнче пулса иртнĕ. Хут уйăрттармасăрах пĕрле пурăнакансем пĕчĕк сăлтавпах хирĕçсе кайнă. Вĕриленсе кайнă кил хуçи хĕрарăмĕ Т. Гроссу пĕрле пурăнакан Ю. Павлова икĕ хутчен кăкăртан тата хырăмран çĕçĕпе чикет. Юри хăтланупа хĕрарăм арçыннăн организмне пысăк сиен кӳрет. Арçын шутлă вăхăтра вырăнтах вилсе каять.

Çак ĕç тĕлĕшпе РФ прокуратурин следстви комитечĕн следстви управленийĕн Етĕрнери районсем хушшинчи следстви пайĕ çийĕнчех уголовнăй ĕç пуçарчĕ.

Паянхи куна ку тĕслĕхпе следстви ĕçĕсем вĕçленчĕç. Суд та пулса иртрĕ. Муркаш район сучĕ Т. Гроссу гражданкăна Раççей Федерацийĕн Уголовнăй Кодексĕн 105 статйин 1-мĕш пайĕнче пăхнă преступленишĕн 6,5 çуллăха ирĕкрен хăтарма приговор йышăнчĕ.

## Çынна вĕлерни çирĕпленмерĕ

**Çынна вĕлернĕ тесе хаклани следстви вăхăтĕнче тӳрре тухманни пулать-и?**

**И. ПАВЛОВ.**

Çапла, кун пекки пирĕн практикăра пулкалать. Акă кăçалхи апрелĕн 9-мĕшĕнче Ойкасра пурăнакан Н. П. Виноградов хăйĕнпе пĕрле пурăнакан О. П. Волкована алăпа-урапа тапса-çапса пĕтерет. Сурансем йывăр пулнă пулас, хĕрарăм çавăнтах вилсе каять. Ку ĕçпе те РФ прокуратурин следстви комитечĕн следстви управленийĕн Етĕрнери районсем хушшинчи следстви пайĕ çийĕнчех уголовнăй ĕç пуçарчĕ. Следстви вăхăтĕнче судпа медицина экспертизи хĕрарăм этил спирчĕпе наркăмăшланнă хыççăн организм пĕтĕмĕшле шăнса кайнипе вилсе кайнă тесе палăртрĕ. Çапла вара Н. Виноградов тĕлĕшпе РФ УК 111 статйин 4-мĕш пайĕпе пуçарнă уголовнăй ĕçе тепĕр статья çине куçарма тиврĕ. Халĕ ку ĕçе район сучĕ пăхса тухать.

***РЕДАКЦИРЕН: асăннă ĕçсем эрех-сăра серепинче пулса иртнине шута илсе çамрăксем çак çултан пăрăнасса, эрех-сăрапа туслашасран сивĕнессе шанатпăр. Çĕр çинче пĕрре пурăнатпăр-çке. Ăна вара урă пуçпа, ыра шанăçпа пурăнса ирттернине нимĕн те çитмест. Эсир мĕнле шутлатăр?***

Çĕр ĕçченĕн çулталăкне халалласа

# Юратнă ĕçре хастарлăхпа палăраççĕ

Эсир сăн ӳкерчĕксенче районти малтуртăмлă çамрăксене куратăр. Пĕрремĕшĕ – ĕнесене машинăпа сăвакан операторсемпе искусствăлла майпа пĕтĕлентерекенсен республикăри конкурсĕнче район чысне хӳтĕленĕ Валентина Александровна Максимовапа («Ударник» хуçалăхран, çамрăксем хушшинче 1-мĕш вырăна тухнă). 13 çул «Свобода» хуçалăх ветеринарĕнче тимлекен Эльвира Юрьевна Любимова **(иккĕмĕш сăн ӳкерчĕкре)** та хăй ĕçĕнче хастарлăхпа палăрать, ытти çамрăксемшĕн тĕслĕх пулса тăрать.





**А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕсем.**